24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941
СЕНТЯБРЬ
20
ШАМАТКУН
222 (5937) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

КАШНИ КОМСОМОЛЕЦĂН ÇАР СПЕЦИАЛЬНОÇĔ ПУЛТĂР

Виçĕ уйăха яхăн ĕнтĕ пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ фашистла Германин ирсĕр бандичĕсене хирĕç çапăçаççĕ. Тăшман пирĕн çĕр çине хăйĕн çĕршер тата пиншер салтакĕсене тăкса хăварать. Унăн çĕршер самолечĕсене, танкĕсене Хĕрлĕ Çарăн паттăр боецĕсем пĕтерсе тăкаççĕ е тытса илеççĕ. Анчах вăрçă хамăра та чылай сиен кӳчĕ, халĕ те кӳрет-ха. Фашистла варварсем пирĕн çĕршыва таптаççĕ, хăйсем вăхăтлăха тытса илнĕ хуласемпе ялсене çаратаççĕ, совет гражданĕсене ирĕксĕрлесе асаплантараççĕ, фашистла бандитсен самолечĕсем мирлĕ халăх çине бомбăсем пăрахаççĕ. Тăшман усал. Вăл юлашки вăйĕсене хурса тискеррĕн кĕрешет. Анчах унăн шăпи тулĕ.

Хальхи вăрçă пĕтĕм халăх вăрçи пулса тăрать. Тăшмана хирĕç пĕтĕм совет халăхĕ çĕкленчĕ. Калинин утăмрах тăшмана хăрушлăх кĕтсе тăрать. Хăюллă партизансем тăшмана яланах кĕтмен çĕртен, тĕл пырса çапаççĕ. Сталин юлташ чĕнсе каланă хыççăн организацииленĕ халăх ополченийĕсем Хĕрлĕ Çарăн помощникĕсем пулса тăраççĕ. Кирлĕ пулсан, калинин тылри ĕççыпăнни, калинин çамрăк алла хĕçпăшал тытса тăшмана хирĕç çапăçма хатĕр. Ялсенчи, хуласенчи комсомол организацисем ертсе пынипе, вĕсем кулленех çар ĕçне вĕренеççĕ.

Отечественнăй вăрçă кунĕсенче комсомол организацисем фронта пулăшас, тыла çирĕплетес, комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксене çар ĕçне вĕрентес, фронт валли çирĕп боецсем, медсестрасем, санитаркăсем ытларах хатĕрлес тĕллевпе ĕçлеççĕ.

Республикăра Осоавиахим организацисен учебнăй подразделенисенче çар ĕçне вĕренме вуншар пин комсомолеца явăçтарнă. Çар ĕçне вĕренессине Шăхасан районĕнче аван йĕркеленĕ. Пĕтĕм комсомолецсен шутĕнчен 82 процентĕ çар ĕçне вĕренме хĕрӳллĕн тытăннă. Çамрăксем çар специальноçĕсене вĕренеççĕ. Районра мотоциклистсен кружокĕ ĕçлет. Комсомолецсемпе çамрăксем тĕл пеме тата санитари ĕçне хăнăхса пыраççĕ. Сывлăпран тапăнинчен тата химиллĕ тапăнуран сыхланма вĕренес тĕлĕшпе 38 кружок организацииленĕ. Район центрĕнчи комсомолецсемпе çамрăксем тактикăллă занятисем туса ирттернĕ.

Вăрçă ĕçне вĕренессине Шупашкар хулинчи комсомолецсемпе çамрăксем те начар мар тытăннă. Çар специальноçĕсене вĕренес тĕлĕшпе мотоциклистсен, шоферсен, связистсен кружокĕсене организацииленĕ. Вĕсенче 40—50 шар çын вĕренеççĕ. Сывлăпран тапăнинчен тата химиллĕ тапăнуран сыхланма вĕренес ĕçе хулари пиншер çамрăксене явăçтарнă. Семинарсенче вĕрентсе ПВХО инструкторĕсем хатĕрленĕ. Вĕсем халăха ПВХО кружокĕсенче вĕрентеççĕ.

Хĕрачасене санитари ĕçне вĕрентесси медсестрасен курсĕсем, сандружинăсем урлă пулса пырать. Республикăра медсестрасен курсĕсенче, сандружинăсенче çĕршер хĕрачасем вĕренеççĕ тата ĕçлеççĕ. Калинин пысăк предприятисемпе учрежденисенче, фабрикăсемпе заводсенче санпостсем организацииленĕ. Унăр пуçне ГСО кружокĕсенче санитари ĕçне пиншер çын ытла вĕренет. Ку ĕçе Октябрьски, Хĕрлĕ Чутай, Элĕк, Сĕнтĕрвăрри районĕсенче уйрăмăнах аван йĕркеленĕ.

Комсомолецсемпе çамрăксем хăйсен тăван çĕршывне юратаççĕ. Унăн пурнăçа шеллемесĕр кĕрешме хатĕр. Ăна мĕнпе те пулин пулăшма тăрăшаççĕ. Отечественнăй вăрçă кунĕсенче вуншар, çĕршер çамрăксемпе хĕрачасем военкоматсене, райкомсене Хĕрлĕ Çар ретне яма ыйтса заявленисем параççĕ. Пĕр Шăхасан районĕнче кăна вуншар çамрăксем заявлени панă. Нумай хĕрачасем—патриотăсем донорсем пулма кăмăл турĕç.

Юлашки вăхăтра республикăри районсенче ВС, ГТО, ГСО, ПВХО значокĕсен нормисене парасси чылай лайăхланчĕ. Шупашкар районĕнче кăна июнĕн 22-мĕшĕнчен вара ВС значокĕн нормисене 202 комсомолец, ПВХО нормисене 321 комсомолец, ГСО нормисене 103 комсомолец, ГТО нормисене 103 комсомолец панă.

Комсомол организацисем комсомолецсемпе çамрăксене çар ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе чылай ĕçлерĕç. Анчах ку тарăнччен тунă ĕçсемпе лăпланса ларма юрамасть. Çар ĕçне вĕренессине татах вăйлатмалла. Калинин комсомолец, калинин çамрăк çар ĕçне вĕренес тĕлĕшпе ĕçлемелле, мĕнле те пулин çар специальноçне пĕлмелле. Комсомолецсен пурин те ВС, ПВХО, ГСО, ГТО значокĕсем пулмалла.

Комсомол организацисен Хĕрлĕ Çар валли ытларах пулеметчиксем, снайперсем, танкистсем, мотоциклистсем, связистсем, медсестрасемпе санитаркăсем вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлемелле. Калинин комсомолецăн пĕрререн кая мар çар специальноçĕ пултăр!

Совет Информаци Бюровĕнчен

(Сентябрĕн 18-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ)

Сентябрĕн 18-мĕшĕнче пирĕн войскăсем пĕтĕм фронтра противника хирĕç çапăçусем туса пынă.

Пирĕн авиаци противникăн мотомехчаçĕсене, пехотине тата артиллерине çапăçу хирĕсенче пыра-пыра çапнă, унăн аэродромсенчи авиацине атакăланă.

Сентябрĕн 16-мĕшĕнче сывлăпри çапăçусенче тата противникăн аэродромĕсенче нимĕçсен 112 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 29 самолет пĕтнĕ.

* * *

КИЕВ ПАТĔНЧИ ХАЯР ÇАПĂÇУСЕМ

Юлашки кунсенче Киев патĕнче хаяр çапăçусем пулса пыраççĕ. Çынсем тĕлĕшпе те, вооруженисем енĕпе те пит пысăк çухатусем тунине пăхмасăр, нимĕçсен фашистла войскисем çапăçăва çĕнĕрен те çĕнĕрен чаçсене кĕрте-кĕрте ярааççĕ. Киев оборонин участокĕсенчен пĕринче противника пирĕн укрепленисене шăтарса тухма тата хула хĕррине пырса çитме май килнĕ. Хаяр çапăçусем малалла пулса пыраççĕ.

* * *

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ЖУЛИКЛА ХĂТЛАННИ

Нимĕçсен Эзель утравне тытса илме хăтланнă фашистла десантне сĕмĕрсе тăкни çинчен тата çав операцире нимĕçсен чылай суднисене шыва путарни çинчен Совет Информаци Бюровĕ сентябрĕн 16-мĕшĕнче пĕлтерчĕ. Сентябрĕн 17-мĕшĕнче гитлеровецсем Совет Информаци Бюровĕн çав пĕлтерӳне сирсе яма кулăшла хăтланса пăхнă, вĕсем «Германи çарĕ утрава тытса илме нихăçан та хăтланман, мĕншĕн тесен Германи командованийĕ çавна тума кирлĕ тесе шутламан», тесе пĕлтернĕ.

Çак тĕлĕшпе акă мĕн каламалла: гитлеровецсем кăçалхи сентябрĕн 13-мĕшпе 15-мĕшĕнче, советăн тинĕсри хĕçпăшаллă вăйĕсем путарнине пула, хăйсен тăватă транспорчĕ, войскăсемпе вооруженi тиенĕ 80 катерĕ тата шлюпкисем, пĕр эсминецĕ çухалнине тата темиçе эсминецпа транспорта сиен кӳнине хăйсем курман пек кăтартма хăтланаççĕ. Гитлеровецсем, çавăн пекех тата, Эзель утравне тытса илме хăтланнă чухне, совет войскисем пĕтернине пула, хăйсен десантнăй войскинчен 15 пин çын çухалнине те курман пек кăтартма хăтланаççĕ.

Фашистсем пирĕн пĕлтерĕвĕ «сирсе яма» хăтланни—Эзель утравĕ çине десант антарса хăварма пăхнă чухне фашистсем пысăк çухатусем тунине вĕсем нимĕç халăхĕнчен тата пĕтĕм тĕнчери обществăллă шухăшран пытарса хăварма жуликла хăтланни пулса тăни уççăнах палла мар-и ĕнтĕ?

* * *

Италири радио «Кăнтăр Добруджа çинче совет самолечĕсем вĕçни» çинчен пĕлтерекен черетлĕ кăвакала кăларса янă. Ку расра совет самолечĕсем Болгари территорийĕ çине пĕтĕмлетсе шутласан 6 парашютист антарса хăварнă иккен. «Вĕсене çийĕнчех Болгари войскисем çавăрса илнĕ те, кĕске вăхăт хушши хаярăн кĕрешнĕ хыççăн, вĕлерсе пĕтернĕ»,—тесе пĕлтерет Италири радио. Элекçĕсем «Болгари войскисене» советăн 6 парашютистне хирĕç пысăк çапăçăва кĕртсе яма та май тупнă, çав çапăçура вара ĕç «хаяр кĕрешӳçĕр» тата «çавăрса илнисĕр» иртме пултарайман.

Совет Союзĕ Болгарине хăйĕн самолечĕсемпе парашютисчĕсене яманнине тата яма та пултарайманнине, Римри радиостанцин çак провокацииллĕ пĕлтерĕвĕ хăйĕн авторĕсене кулăшла тата ăссăр положенине кăна кĕртсе ӳкернине кăтартса пама кирлех те мар.

* * *

Фронтăн Çурçĕр-Хĕвеланăç енчи участокĕсенчен пĕринче пирĕн артиллери персе тăнипе противникăн 8 танкне, 8 бронеавтомобильне тата 30 грузовой автомашинине пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн войскăсем тăшманăн 12 танкне, 15 бронеавтомобильне, 6 грузовикне пĕтерсе тăкнă, зенитнăй артиллерин 6 точкине путарса лартнă.

Юлашки кунсенче противникăн Баренцово тинĕсĕнче путарнă пысăк транспорчĕсемпе пĕрле нимĕçсен нумай салтакĕсем вилнĕ тата хĕçпăшалсем нумай пĕтнĕ. Тытăкăна лекнисем кăтартса панă тăрăх, улттăмĕш сăрт-ту дивизийĕн часĕсене илсе пыракан пĕр пысăк транспорта Нарвикран Киркенеса пынă чухне торпеда ярса путарнă. Личнăй составăн пысăк пайĕ тата мĕнпур хĕçпăшалсем шыва путнă. Çав çул çинчех торпеда ярса путарнă тепĕр транспорт çинчи нимĕçсен 800 салтакĕсемпе офицерĕсенчен 8 çын кăна çăлăнса юлнă.

* * *

Фронтăн Кăнтăр-Хĕвеланăç енче Гладенко лейтенантăн звени нимĕçсен мотомехчаçĕсене атакăланă. Тăшманăн зенитнăй артиллерийĕ звено командирĕн самолетне вут тивретсе янă. Пĕтĕм вăя тата ирĕке хурса, советăн паттăр летчикĕ хăйĕн машинине йĕркене кĕртнĕ те ăна Сейм юханшывĕ урлă нимĕçсем хывнă переправа çине тĕлленĕ. Çунакан самолет взрыв пулса сирпĕннипе переправăна аркатса тăкнă. Тăшманăн переправа çинче пулнă танкĕсемпе автомашинисем шыва сирпĕнсе ӳкнĕ, вĕсем çинче пехота пулнă. Хăйĕн геройла çĕпе Гладенко юлташ противникăн войскисем малалла кӳçса пырассине аркатса янă.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли—ăшă тумтирсем

Сентябрĕн 13-мĕшĕнче Наркомфинра ĕçлекенсен коллективĕн пухăвĕ пулчĕ. Çак пухура вĕсем Хĕрлĕ Çара валли ăшă тумтирсем парса пулăшасси çинчен сӳтсе-явăрçĕ. Пухура тухса каланисем пурте пĕр сасăпа Хĕрлĕ Çара ăшă тумтирсем парса пулăшас ĕçе кăмăлларĕç. Çав пухурах ăшă тумтирсене пухма комисси суйласа хăварчĕç. Халĕ нумайĕшĕ комиссине ăшă тумтирсем пырса пачĕç. Ф. Николаева юлташ пĕр мăшăр çăматă пачĕ. Новикова-па Бородин ваткăпа çĕленĕ ăшă фуфайкă тата пĕр ăшă брюки илсе пачĕç. Çавăн пекех Лисинăпа Чурмеева тата ытти юлташсем те ваткăпа çĕленĕ ăшă фуфайкăпа ăшă брюкисем илсе пачĕç. Нумайĕшĕ иккĕн пĕр мăшăр çăматă илсе параççĕ. Çапла вара паянхи куна ваткăпа çĕленĕ 5 фуфайка, 5 ăшă брюки, 11 мăшăр çăматă, 20 штука çăмран çыхса тунă фуфайка, 33 шарф, 10 çĕлĕк тата темиçе мăшăр носки, алшипсем пачĕç. Ăшă тумтирсем халĕ те пухаççĕ.

* * *

Наркомюст коллективĕ Хĕрлĕ Çара валли ăшă тумтирсем парса пулăшас ĕçе ăлшăн кăмăлласа йышăнчĕ. Н. Хримли юлташ çĕнĕ хура кĕрĕк, пĕр çĕлĕк, çăмран çыхса тунă шарф пачĕ. А. Никитин юлташ пĕр мăшăр çăматă, 2 тир, ăшă фуфайка, çур килограмм çăм, Е. Иванова юлташ 3 тир, пĕр фуфайка пачĕç. Машинистка Х. Захарова юлташ 500 грамм çăм пачĕ. Нумайĕшĕ çăмран çыхса тунă фуфайкăсем, алшипсем, носкисем тата ытти ăшă япаласем параççĕ. Наркомюст коллективĕ Хĕрлĕ Çара ăшă тумтирсем парса пулăшас ĕçе кулленех вăйлатса пырать.

* * *

ÇЕРПУ. Шупашкарти Ленин ячĕпе тăракан фабрикăри рабочисемпе работницăсен чĕнĕвне «Сталинцы» колхоз членĕсем ăшшăн йышăнса илчĕç. Вĕсем пурте пĕр шухăшлă пулса Хĕрлĕ Çара ăшă тумтирсем пама пулчĕç. Колхоз фондĕнчен 5 мăшăр çăматă йăваласа паратпăр. Уйрăм колхозниксем пурте алшип-чулхасем, çăматăсем е ăшă тумтирсем пачĕç. Çапла вара «Сталинцы» колхоз членĕсем 30 мăшăр носки, 30 мăшăр алшип, 20 тир тата ытти япаласем те пачĕç.

80 çулхи колхозник Иван Егоров та пĕр мăшăр носки, пĕр мăшăр алшип пама пулчĕ. Евдокия Иванова колхозницăн упăшки фронтра, вăл пĕр тир, пĕр мăшăр носки, пĕр мăшăр алшип пачĕ. Хĕрлĕ Çара ăшă тумтирсем парас ĕç колхозниксем хушшинче сарăлсах пырать.

А. МИХЕЕВ.

Ишлейри вăтам шкулта ĕçлекен учительсем тата вĕренекенсем боецсем валли ăшă тумтирсем пухасси çинчен колхозниксене ăнлантарса парас ĕçе активлăн хутшăнчĕç. Çавăнпа пĕрлех вĕсем хăйсем те ăшă тумтирсем пухаççĕ.

Вăтам шкулта вĕренекенсем 44 мăшăр çăм чулха, 31 мăшăр алшип, 4 шарф, икĕ ăшă кĕпе т. ыт. параççĕ. Учительсем кĕрĕк пиншаксем, çăматăсем, ăшă кĕпесем параççĕ. А. Иванова юлташ кĕрĕк пиншак, пĕр ăшă кĕпе, Сорокин пĕр мăшăр çăматă, Ефремов 4 тир, Харитонова пĕр мăшăр çăматă пачĕç т. ыт.

«Ишлей» колхоз 5 мăшăр çăматă, 20 ăшă кĕпе тата ваткă хурса çĕленĕ 4 пиншак парать. Çакăн пекех ăшă тумтирсем пухас ĕç ытти колхозсенче те сарăлсах пырать.

Д. МИХАЙЛОВА.

Шупашкарти Торгсоюзплодоовощ трестĕнчи служащисем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 6 мăшăр çăматă тата çăмран алшип-носкисем çыхса пама пулчĕç. М. Пичушкин юлташăн виçĕ шăлнĕ фронтра, вăл Хĕрлĕ Çар боецĕсене валли 3 мăшăр перчатка, 3 ăшă кĕпе пама пулчĕ.

Н. Ю.

Отечественнăй аслă вăрçăн геройĕсем

Укерчĕк çинче: Хĕрлĕ Çар командирĕсен группи, Германи фашизмне хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартулăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюллăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн вĕсене Совет Союз Геройĕн званине панă. Сулахайран сылтăмалла—майор **И. А. Кадученко**, лейтенант **А. В. Рыжиков**, кĕçĕн лейтенант **А. М. Лукьянов**, капитан **В. И. Матвеев** тата старший лейтенант **П. А. Маркуца**.

Совет Информаци Бюровĕнчен

(Сентябрĕн 19-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ)

Сентябрĕн 19-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем пĕтĕм фронтра противника хирĕç çапăçнă, Киев патĕнче уйрăмăнах хаяр çапăсусем пулса пынă.

Пирĕн авиаци противникăн мотомехчаçĕсене, пехотине тата артиллерине çапăçу хирĕсенче пыра-пыра çапнă, унăн аэродромсенчи авиацине атакăланă.

* * *

Городянский командир пулса ертсе пыракан чаççем, фронтăн хĕвеланăç енче çапăçаканскерсем, юлашки виçĕ кун хушшинче нимĕçсен 605 салтакĕсемпе офицерĕсене, 34 танкне, 6 бронемашинине, 24 мотоциклне, 20 автомашинине, 2 тягачне, горючи тултарнă цистернăна, 4 станковăй пулемета пĕтерсе тăкнă тата 13 оруди тытса илнĕ. Полковник Чихаринăн часĕ противникăнне 4 танк, 4 оруди, снарядсем тултарнă 5 ещĕк, 17 станковăй пулемет тытса илнĕ. Полковник Груздевăн часĕ нимĕçсен стрелковăй полкне çĕмĕрсе тăкнă. Сахаров юлташăн батальонĕ противникăн икĕ пехотнăй ротине аркатса тăкнă, 4 оруди тата 8 пулемет туртса илнĕ. Соловьев юлташ командир пулса ертсе пыракан стрелковăй соединени, фронтăн хĕвеланăç енчи участоксенчен пĕринче кĕрешекенскер, нимĕçсен 63-мĕш мотострелковăй полкне пысăк çухатусем кӳнĕ.

* * *

Фронтăн Çурçĕр-хĕвеланăç енче нимĕçсен пехотнăй дивизийĕсенчен пĕрин 6-мĕш полкĕн 3-мĕш батальонне çĕмĕрсе тăкнă. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен 200 ытла салтакĕсемпе офицерĕсем вилсе юлнă. Трофейăсен шутĕнче—темиçе тупă, 10 пулемет, çĕршер винтовкăсем, 20 автомашина, 20 лав тата 56 лаша.

* * *

Нимĕçсен тытăкăна лекнĕ летчикĕсем хăйсен показанийĕсенче совет авиацийĕн çапăçури пысăк пахалăхне палла тăваççĕ. 51-мĕш сывлăпри флотилийĕн радисчĕ ефрейтор Эрнст Эль çапла калать: «Вырăс авиацийĕ çинчен пире: унăн лайăх машинăсем çук, мĕншĕн тесен вăрçăн малтанхи кунĕсенчех мĕнпур самолечĕсене пĕтерсе тăкнă, тесе калатчĕç. Шел пулсан та, сывлăпра вырăс самолечĕсемпе тата летчикĕсемпе тĕл пуличчен эпир сакна йиеннĕ. Малтанхи çапăçăвах маншăн хурлăхлăн вĕçленчĕ. Пирĕн самолета персе ӳкерчĕç, акă эпĕ халĕ кунта». Пилот-разведчик Шейфер Норберг хăйĕн показанийĕсенче совет летчикĕсем вĕрçĕнĕ машинăсем çинче вĕçнине тата çав летчиксем хăйсен ĕçне чаплăн вĕреннине палăртнă. «Эпĕ поляк тата француз летчикĕсене хирĕç сывлăпра пулса иртнĕ çапăçусене хутшăннă,—тесе калать тытăкăна лекнĕскер,—çав çапăçусенче яланах çĕнтернĕ, кунта вара, виççĕмĕш хут вĕçсе килсенех поражени тӳрĕм». «Юнкерс-88» бомбардировщикăн командирĕ лейтенант Рудольф Мессершмитт каласа панă тăрăх, «вырăссен сывлăш флотĕнчи летчиксен составĕ питех те лайăх вĕренсе хатĕрленнĕ. Эпир вырăссен истребителĕсемпе тĕлпулма хăранă. Пирĕн авиаци группи юлашки уйăх хушшинче кăна 27 самолетран 19 самолетне çухатрĕ». Летчик ефрейтор Андреас Беккер çапла калать: «Сирĕн самолетсем пирĕн войскăсене ирĕклĕн çапăçма памаççĕ. Вырăс истребителĕ питех те çивĕчĕ, вăл маневрсене питех те çăмăллăн тата хăвăрт тăвать. Юлашки кунсенче эпир сирĕн «И-17» йышши истребительсенчен уйрăмах пысăк çухатусем тӳсрĕмĕр».

* * *

Г. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ Херсон таврашĕнче кĕрешет. Хуларан темиçе километрта партизансен горючи усраканă склад çине пырса тапăннă. Охранăна вĕлерсе пĕтернĕ те, отряд бензин тултарнă 9 цистернăна чĕртсе янă. Хула хĕрринче партизансем нимĕçсен 6 салтакне персе вĕлернĕ, çав салтаксем хĕрарăма ирĕксĕрленĕ пулнă. Кăнтăрла партизансен группи хулана пырса кĕнĕ те, фашистсен офицерĕсем ĕçкĕ ĕçекен ресторана темиçе граната ывăтнă. Пиллĕк офицера вĕлернĕ, 7 офицера амантнă.

Запорожье облаçĕнчи Федоровка салинче нимĕçсем зернохранилище тунă. П. юлташ отрядĕнче тăракан вырăнти колхозник-партизан çĕрле зернохранилище патне шăвăнса пырса часовойне шăппăн вĕлернĕ те, складсене вут чĕртсе янă. Тырпул çунса кайнă. П. юлташ отрячĕ нумаях та пулмасть Запорожье облаçĕнчи Августиновка салинче нимĕçсен застависем çине пырса тапăнса, фашистсен салтакĕсемпе офицерĕсене 35 çын пĕтерсе тăкнă. Партизан-разведчик Пантелей К. Фалеевка сали патĕнче нимĕçсен 12 салтакне асăрханă, çав салтаксем резинăран тунă икĕ кимĕ çине ларса Днепрăн сулахай çыранĕ патне иртсе килнĕ. Паттăр партизан нимĕçсем çине пулеметран пеме пуçланă. Тĕл персе тивретсе вăл фашистсен салтакĕсене пĕтерсе тăкнă.

* * *

Советлă Украинăн тытса илнĕ районĕсенче нимĕç фашисчĕсен мерзавецĕсем мирлĕ совет халăхне халĕ те тискеррĕн асаплантараççĕ. Житомир облаçĕнчи Мединова Слобода салинче нимĕçсем офицера хирĕç тăнăшăн икĕ хĕре персе вĕлернĕ. Виççĕмĕш хĕр, хăйне офицер хăваланинчен хӳтленсе, алла мĕн лекнĕ—çавна илсе, офицера питĕнчен çапнă. Çав кунах фашистсем хăюллă хĕре, унăн ашшĕ-амăшĕсене, шăлнĕсемпе пăмăкĕсене тата 5 заложнике персе вĕлернĕ. Липовка салинче палла мар çынсем нимĕçсен икĕ салтакне вĕлернĕ пулнă. Нимĕçсем пĕр колхознике шанмасăр, çав салтаксене вĕлернĕ çĕре хутшăннă, тесе айăпланă. Вĕсем çав колхознике пĕтĕм семьипех арестленĕ те, чĕрĕллех çĕр айне пытарнă.

Базар местечкинче нимĕç комендантчĕ пĕтĕм халăха площаде пухнă та, вĕсене 24 сехет хушшинче 200 кĕрĕк пиншак, 200 мăшăр ăшă алса тата 100 мăшăр çăматă тупса пама хушнă. Халăх хушшинчен ватă учитель-пенсионер Григоренко тухнă та: нимĕçсем пĕтĕм тумтирсене—хĕллехи тумтирсене çеç мар, тата çуллахи тумтирсене те, ачапăча тумтирсене те илсе кайрĕç, тесе каланă. Урса кайнă комендант старикне пуçран пистолетпа çапса ураран ӳкернĕ. Халăх хушшинче тарăхнине кăшкăрнă сасăсем илтĕнсе кайнă. Çакăн хыççăн комендантпа пĕрле çӳрекен салтаксем халăх çине пăшалсенчен пеме пуçланă.

* * *

Совет хĕрарăмĕсем хăйсене шеллемесĕр Хĕрлĕ Çарăн аманнă боецĕсемпе командирĕсен пурнăçне сыхласа упраса хăвараççĕ. Рязанов юлташ командир пулса ертсе пыракан санитари авиацийĕн отрядĕнчи медицина сестрисем Шацкая, Мовчанова тата Соколовская юлташсем аманнă красноармеецсене вырнаçтарнă пулнă. Кĕтмен çĕртен тăшман бомбардировщикĕсем вĕçсе пынă. Вилĕмрен хăрамасăрах, сестрасем аманнă воинсене пурне те хӳтлăхлă вырăна илсе кайнă. Дружинница Петрова юлташ аманнă красноармеецсене пысăк лачака урлă çĕклесе каçарнă. Ленинградшăн пыракан çапăçусен участници Елена Иванова, кĕçĕн лейтенантăн Климов юлташăн подразделенийĕнчи боецсемпе пĕрле çӳресе, противник вăйлăн персе тăнине пăхмасăрах, аманнисене перевязкăсем тунă. Медицина сестри—килхуçи хĕрарăмĕ Синельникова йывăр аманнă боец вырăнĕ патĕнчен темиçе кун тата темиçе çĕр ниçта та уйăрăлман, тăрăшса пăхнипе ăна вилĕмрен çăлса хăварнă. Çамрăк дружинница Зоя Гафперова пĕр вăхăтрах йывăр аманнă икĕ красноармееца пăхнă. Гафперова юлташ хăйне хăй шеллемесĕр тăрăшнине пула, вĕсем иккĕшĕ те сывалнă.

Иранăн çĕнĕ шахĕ присяга йышăнни

ТЕГЕРАН, сентябрĕн 18-мĕш. (ТАСС). Енер каçхине меджлис залĕнче Иранăн çĕнĕ шахĕ Мохаммед Реза Пехлеви присяга йышăннă.

Иранра политикăллă ĕçсемшĕн тĕрмене хупнă çынсене ирĕке кăларни

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 18-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствăн пĕлтернĕ тăрăх, Иранăн çĕнĕ шахĕ политикăллă ĕçсемшĕн тĕрмене хупнă нумай çынсене ирĕке кăларнă, вĕсем хушшинче çар министрĕ пулнă генерал Нахиджевани те пур, ăна малтанхи шах тĕрмене хупнă пулнă.

Англи войскисем Тегерана пырса кĕни

ЛОНДОН, сентябрĕн 18-мĕш. (ТАСС). Англири радио пĕлтернĕ тăрăх, Англи войскисем Тегерана пырса кĕнĕ.

РЕСПУБЛИКĂРИ УЙХИРСЕНЧЕ

ИЕПРЕÇ. Сентябрĕн 8-мĕшĕнчен пуçласа район центрĕнчи учрежденисенче ĕçлекен служащисем, калинин учрежденисенче ĕçлекен служащисемпе пĕрле пуçтарăнса, колхозсене тырă вырма тухса кайрĕç. Вĕсем халь «Заря», «Правда» тата «Коммунар» колхозсенче пĕр эрне ĕнтĕ тырă выраççĕ.

«Заря» колхозра ВКП(б) райкомĕнче, МТС-ра, районри хаçат редакцинче, вăрманпромхозра, государство банкĕнче тата лесхозра ĕçлекен служащисем пурĕ 18 çын ĕçлеççĕ, вĕсем малтанхи кунран пуçласах пысăк тухăçлăхпа ĕçлеме тытăнчĕç. Машинно-тракторлă станцин комбайнĕ «Заря» колхоз уйхирĕнче 65 гектар сĕлĕ вырса пуçтарнă. Районран пынă бригада комбайн вырса пуçтарнă сĕлĕ сортласа тасатрĕ. Хăшпĕрисем çуртсырри выраççĕ. Районри типографинче ĕçлекен Е. Архиповăпа М. Кабаева кунне 60 тĕм тырă выраççĕ.

Колхоз хĕрсех аван çапать. Итем çинче аван çапакан машина таттисыпписĕр кĕрлет. Вырса пуçтарнă тырра капана хывинчонех çапса ĕлкĕрсе пыраççĕ. Колхозри стахановецсем аван çапнă çĕртсе ырми-канми ĕçлеççĕ. Ф. Захарова, В. Пашкова, Г. Илларионов, И. Григорьев, Ф. Арсентьев тата ытти те кăнтăрла тата каçхине те ĕç патĕнчен уйăрăлмасăр стахановла ĕçлесе пыраççĕ. Е. Гусева, М. Петаев, А. Перцова, А. Данилова çапнă тырра итем çинчен амбара гуртараççĕ.

В. АНДРЕЕВ.

* * *

СĔНТĔР. Молкачкассинчи «Восток» колхоз тырпулсене вырса пĕтернĕ хыççăнах аван çалма пуçларĕ. Паянхи куна 5-мĕш бригада ырăн çапса пуçтарчĕ. Колхозăн 4 молотилка, вĕсемпе иртен пуçласа каçченех аван çапаççĕ. Çапнă улăма çав куннех улăмури туса лартаççĕ. Колхоз государство умĕнчи обязательствăсене те срокченех тултарнă.

Колхозниксем хушшинче ĕç нормисене тултарманнисем пачах çук. Ю. Столярова, П. Столярова тата В. Баранова юлташсем çурхи тырăсене пуçтарса кĕртнĕ чухне кунне виçшер ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ.

С. МАМАЕВ.

* * *

ÇЕРПУ. Районри колхозсем кăçал пухса илнĕ пахча-çимĕçсене государствăна пама пуçларĕç. «Торгплодоовощь» контори сентябрĕн 16-мĕш тĕлне районри колхозсенчен хăяр—72 тонна, ир пулакан купăста—5 тонна, помидор—448 килограмм йышăннă.

«Торгплодоовощь» контори хĕлле валли 34 тонна хăяр тăварлаçа лартнă.

Г. ПЕТРОВ.

Иран халăхĕ шах вырăнтан тухнине саламлать

ТЕГЕРАН, сентябрĕн 18-мĕш. (ТАСС). Тегеран халăхĕ шах Реза Пехлеви престолран тухни çинчен пĕлтернине çавтери пысăк кăмăлтан ырласа йышăннă.

Пĕлсе тăракан çынсем хушшинче паллă пулнă тăрăх, хăйĕн влаçне сыхласа хăварассишĕн тата Совет Союзĕпе Англи правительствисем панă сĕнӳсене, Иран правительстви йышăннăскерсене, пурнăçлама чăрмантарса пырассишĕн шах юлашки вăхăтченех пĕтĕм вăйне хурса тăрăшнă. Шах гитлерла агентсемпе çирĕппĕн сыхăнса тăни питех те уççăн палăрса пырать. Англипе Совет Союзĕн правительствисен сĕнĕвĕсене Иран правительстви йышăннă хыççăн та шах Тегеранра Германи агентурине çăлса хăварассишĕн ĕçлесе пынине çакăнпа кăна ăнлантарса памалла. Вăл чи маслă офицерсене Англипе Совет Союзĕн войскисем Ирана пырса кĕнине хирĕç тăма хушнă. Генерал Нахиджевани Совет Союзĕпе Англи войскисене хирĕç тăрассине чарса лартма приказ парсан, шах ăна çавăнтах çар министрĕн постĕнчен кăларнă та, кайран тĕрмене хупнă. Хăйĕншĕн килĕшӳсĕр государственнăй деятельсем тĕлĕпше шах яланах çавнашкал методсемпе усă курнă. Шах вăрттăн полици тытса тăнă, çав вăрттăн полици çĕршывра питех чарусăр хаяр террор туса пынă. Ку енчен Тегеранри полицин начальникĕ питех «палла тухнă». Вăл, шах директивисем тăрăх ĕçлесе пырса, Германин Тегеранра йăва çавăрнă шпионла агентурине юлашки вăхăтченех пур майсемпе те хӳтлесе пынă.

Шах полицине офицерсем пулăшса тăнипе халăх хирĕç тăнине путарса лартса, влаçра юлма шанса тăнă, вара çĕршыва малалла та вилĕм çулĕпех илсе пырассăн пулнă. Анчах та вăл халăх массисем кăна мар, çарăн чылаях ĕшшăлă çыннисем те çĕршывăн вилĕмле политикăна—вăл тытса пыракан политикăна хӳтлесе пырассăн маррине хăвăртах ĕненсе илнĕ. Юлашки вăхăтра чылай офицерсем немĕç фашисчĕсем çĕршыва пусмăрласа тăни пĕтсе ларнă тĕлĕпше хăйсем савăннине уççăнах каласа пĕлтернĕ. Хăшпĕр выраçенче халăхăн демонстрацийĕсем пулса иртнĕ, вĕсем халăх шахпа питех те килĕшменнине кăтартса панă. Вăл престолран хăй тухмасан, тарăхса çитнĕ халăхăн хумĕ ăна сирпĕтсе тăкасси шахшăн уççăн паллă пулнă, çавăнпа вăл престолран тухнă та, Исфагана кайнă. Шах нумай çул хушши халăха çаратса пухнă хăйĕн çавтери пысăк пурлăхĕн чылай пайне малтанах ютçĕршыва куçарнă тесе пĕлтереççĕ.

Пресс-конференцире Нокс тунă заявлени

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 18-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тинĕс-çар министрĕ Нокс, пресс-конференцире çакăн çинчен тухса каланă: аренда йĕркипе е кивçен хĕçпăшал памалли закон тăрăх паракан Америка материалĕсене Англине кăрушлăхсăр çитерес ĕçре Америка флочĕ мĕнпур майсемпе, çав шутрах конвоированипе те, усă курать. Нокс çакна кăтартса панă: «суту-илӳ суднисене çар карапĕсемпе конвоирласа хӳтлесе çӳресси вăл усă курма май пур тата халĕ ĕнтĕ усă куракан нумай тĕрлĕ меслетсенчен пĕри пулса тăрать».

Çапла ĕнтĕ, Атлантика океанĕн çурçĕр енче грузсем тиесе çӳрекен суту-илӳ суднисене Америкăн çар карапĕсемпе самолечĕсем хӳтлесе пыраççĕ тесе, малтанхи хут официально пĕлтернĕ.

Нокс çакна çирĕплетсе каланă: «Пĕтĕм тĕнчери иртнĕ вăрçăранпа суту-илӳпе çӳрекен суднăсене хӳтлемелли меслетсемпе чылай ытларах усă кураççĕ, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем çав меслетсемпе ĕнтĕ пуринпе те усă курса пыраççĕ». Корреспондентсем Нокспан Америкăн çар карапĕсем суту-илӳ суднисене Исланди сывăхĕнчи пункта çитиччен ăсатса ярса, малалла çав суднăсене Англи патне çитичченхи çул çинче Англин тинĕç-çар флочĕ хӳтлесе пырать-и? тесе ыйтнă. Нокс çакăн çинчен тĕпĕ-йĕрĕпех ответ пани ырах пулман пулĕччĕ, тесе ответленĕ. Нокс çапла кăтартса панă: тинĕç-çар министерстви шухăшĕпе Германин рейдерĕ Лăпкă океанра таçта Галафагосски утравсен районĕнче ишсе çӳрет. Нокс, Америкăн çар карапĕсем çав района тĕпчесе тĕрĕслес ĕçе туса пыраççĕ тесе, кăтартса панă.

Норвегири лару-тăру

СТОКГОЛЬМ, сентябрĕн 17-мĕш. (ТАСС). «Социалдемократен» хаçат Гетерборгран çапла пĕлтерет: Сентябрĕн 14-мĕшĕнче Норвегин пĕр журналисчĕ кунта килнĕ, вăл Осло хулинчен юлашки минутăра тарма ĕлкĕрнĕ. Вăл çапла каласа парать: пĕтĕм çĕршыв, уйăмах Осло хули, сентябрĕн 10-мĕшĕнче çавтери хăрушă картина тӳснĕ. Нимĕçсем çынсем сывăрнă вăхăтра арестлеме тытăннă. Ирхине пиллĕк сехетре гестапон пысăк грузовикĕсем урамсене пырса тухнă, массăллă арестсем пуçланнă. Арестленисене кĕскен кăна допроссем тунă та, нимĕçсен тĕрмине илсе кайнă. Нимĕçсем хăйсен тĕллевĕсем валли Норвеги тĕрмисемпе усă курнă, вĕсенче ахаль те тăвăр, пĕччен лармалли кашни камерăна 4-шар çынна вырнаçтарнă. Кусемсĕр пуçне, Норвегире виçĕ концентрацийлĕ лагерь тунă та ĕнтĕ. Анчах, террора пăхмасăрах, Норвеги халăхĕн хăватлă чун-хăватне путарайман. Нимĕн иккĕленмелли те çук, оккупантсене хăрушшăн курайманни пур, унăн вĕçĕ те, хĕрри те çук.

Фашистла вăрă-хурахсен тĕлĕнмелле тискер преступленийĕсем

НЬЮ-ЙОРК. (ТАСС). Германи фашисчĕсем хăйсен ытла та тискер ĕçĕсен вăрăм списокĕ çумне тата тепĕр çĕнĕ преступлени хушса хунă. Оверсис ньюс агентствин Лиссабонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Францирен килнĕ çынсем çапла каласа параççĕ: Гренобль хулинчи пĕр больницăра Франçин тыткăнра пулнă çар çыннисем вырнаçнă, вĕсене Германири концентрацийлĕ лагерьсенчен кăларса янă. Тыткăнра пулнă çар çыннисенчен чылайĕшĕ менингитпа чирлесе вилнĕ. Çапла массăллăн чирленине кура врачсем: тыткăна лекнисене Германирен ăсатиччен юриех чир ертнĕ пулĕ, тесе шухăшлаççĕ.

Нимĕçсен çĕнĕ преступленийĕ çинчен калакан хыпар Францире хăвăрт сарăлнă, халăхăн пур сийĕсене те хытă тарăхтарса янă. Гренобльри больница умĕнче çынсем пухăнаççĕ. Халăх хушшинчен «Ылханлă нимĕçсене хамăр тăвансене вĕлерме памăпăр! Нимĕçсене вилĕм!»—тесе кăшкăраççĕ.

Румыни министрĕ ирĕксĕрех йышăнни

СТАМБУЛ, сентябрĕн 17-мĕш. (ТАСС). Румыни çарĕ Одесса патĕнче питĕ те нумай сухатусем тӳснине Румыни влаçĕсем хăйсем те ирĕксĕрех йышăнаççĕ. Çак кунсенче Бухарестра пулса иртнĕ пресс-конференцинче премьер-министр заместителĕ Михаил Антонеску çапла каланă: «Эпĕ сире Одесса патĕнче пирĕн войскăсем сисĕнмеллех сухатусем туйни çинчен пĕлтерме тивĕç». Çак конференцире Антонескун сăн-пичĕ ытла та хурлăхлă пулнă, «сĕнтерӳçĕ» кун пек пулнине халиччен те курманччĕ, тесе паллă тăваççĕ корреспондентсем. Чăннипе каласан, пусăрăннă шухăшкăмăл пĕтĕм Бухареста çавăрса илнĕ.

Гитлеровецсем Румынири хăйсен тарçисене килĕштермеççĕ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 17-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, нимĕç командованийĕ хăйĕн союзникĕ Румыни вăрçă операцийĕсене çителĕксĕр туса пынăшăн питех те тарăхать. Анкăрăра потсĕршыв çыннисем çапла кăтартса параççĕ: нимĕçсем Румынин Чиуперка генералне тата Румыни çарĕн ытти темиçе офицерне Днестр лешъенче наступлени тума килĕшменшĕн перçе пăрахнă.

Черновицы партизанĕсем Румыни „губернаторне“ вĕлернĕ

АНКАРА, (ТАСС). «Универсул» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Румыни подполковникĕ Александр Риошану, Румыни влаçĕсем Буковинăра губернатор вырăнне лартнăскер, Черновицы хулине килнĕ хыçăн ăнсăртранах вилсе кайнă. Унăн виллине самолетпа хăвăртах илсе кайнă. Риошану мĕнле сăлтавпа вилнине хаçатсем пĕлтермеççĕ.

Кунта паллă пулнă тăрăх, Риошануна Черновицы партизанĕсем вĕлернĕ.

Генерал фон-Шоберт вилнĕ

СТОКГОЛЬМ, сентябрĕн 14-мĕш. (ТАСС). Германин верховнăй командованийĕ хăйĕн сводкинче пĕлтернĕ тăрăх, Германин пĕр çарĕн главнокомандующийĕ генерал-полковник фон-Шоберт сентябрĕн 12-мĕшĕнче хĕвелтухăç фронтĕнче вилнĕ.

„Вырăс халăхĕн геройлăхĕ“

Шупашкар парткабинетĕнчи выставка

Нумаях пулмасть ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн парткабинечĕ «Вырăс халăхĕн геройлăхĕ» темăпа нумай тĕрлĕ материалсем пухса пысăк выставка уçрĕ.

Çак выставкăна уçни халĕ, отечественнăй маслă вăрçă вăхăтĕнче, ĕççыннисене вырăс халăхĕн иртнĕ паттăр кунçулĕпе паллаштарас ĕçре питех те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Выставкăри фотодокументсем, историллĕ материалсем, диаграммăсем, портретсем, карттăсем историн нумай тапхăрĕсене куç умне яр-уççăн кăларса тăратаççĕ.

Выставкăн пĕрремĕш отделне чаплă полководецсен — Александр Невскийĕн, Дмитрий Донскойăн, Мининпа Пожарскийĕн, Суворовăн, Кутузовăн, Багратионăн тата ыттисен геройла пурнăçĕсене кăтартса паракан материалсене вырнаçтарнă.

Выставкăна пынă çынсем çак отделри материалсене пăхса саврăнсан, Карл Маркс сăмахĕсем çинче чарăнса тăраççĕ. Вăл çапла калать:

«1242. Александр Невский выступает против немецких рыцарей, разбивает их на льду Чудского озера, так что прохвосты были окончательно отброшены от русской земли». Çак сăмахсем паянхи кунпăн та вĕр-çĕнĕ пек илтĕнеççĕ.

Малалла выставкăра Мускав княжестви «ылттăн ордана» хирĕç çапăçнине кăтартса панă. Ку тĕлте пирĕн çулпуç Сталин юлташ калать сăмахсене илсе кăтартни питех те вырăнлă пулнă:

«...интересы обороны от нашествия турок, монголов и других народов Востока требовали незамедлительного образования центральных государств, способных удержать напор нашествия».

Çавăн пекех выставкăра вырăс халăхĕн 1812 çулти отечественнăй вăрçи пирки калакан материалсем те пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

«Эпир тăшмансене ĕлĕк те çапнă, халĕ те çапатпăр тата малалла та çапăпăр!» Çакăн пек аншлаг айне пĕрлештернĕ выставкăри чи пуян та чи паха отдела,—кунта пирĕн çĕршыври халăхсем пролетариллĕ революцин çĕнтерĕвĕсемшĕн, тăван çĕршыв ирĕклĕхĕпе чыслăхĕшĕн граждан вăрçин маслă фрончĕсенче паттăрран кĕрешнине, халăхсен кĕрешĕвне большевиксен партийĕ, маслă çулпуçсем Ленинпа Сталин ертсе пынине, вĕсем ертсе пынипе эпир пур фронтсенче те çĕнтерӳ тунине кăтартса панă.

Куç умне революцин маслă полководецĕсем Сталин, Ворошилов, Буденный, Тимошенко, Фрунзе, Чапаев, Щорс, Лазо т. ыт. те тухса тăраççĕ.

Хальхи отечественнăй маслă вăрçă мĕнле пынине хаçат-журналсенчен илнĕ чĕрĕ материалсемпе, нумай тĕрлĕ фотодокументсемпе кăтартса панă. Кунта пирĕн мĕн хӳтлемелли тата мĕнпе хӳтлемелли пурте пурри уççăнах куç умне тухса тăрать.

Выставка пĕр шухăша çирĕплетсе парать: пирĕн тăван çĕршыври халăхсем хăйсен вăрăм историйĕнче мĕнпур пек тăшмансене яланах çĕнтерсе пынă, хăйсен çĕрĕсем çине килсе кĕме пăхнă «кĕтмен хăнасене» яланах çапа-çапа аркатнă, çакă вăл халĕ те çапла пулса пырать тата малалла та çаплах пулĕ.

Н. ЮМАНГАЙ.

Шăлан çырли ытларах пухар

Атăл тăрăхĕнчи çырансенче тата Шупашкарпа Канаш хушшинчи çул тăрăх шăлан йывăççи нумай ӳсет. Çак йывăçăн çырлисем халь пиçсе çитнĕ, ăна пуçтарассине пур вырăнсенче те организацилес пулать. Шăлан çырлинче «С» ятлă витамин (оскарбиновăй кислота) нумай пулать. Çав витамин çынăн организмне çирĕплетме, ерекен чирсемпе кĕрешме тата вăл чирсем ересрен сыхланма пулăшать.

Шăлан çырлинче ытти çырласемпе ӳсен-тăрансенчен темиçе хут нумайрах витамин пулать. Сăмахран, шăлан çырлинче хура хурлăханран 10 хут, лимонран 40 хут, йывăç улминчен 100 хут ытларах витамин шутланать. Çавăнпа та витамин нумай паракан шăлан çырли пуçтарассине уйрăмăнах халĕ вăйлатни кирлĕ.

Мĕншĕн тесен, «С» витамин тăван çĕршыва сыхлакан боецсен вăйне тата сывлăхне çирĕплетме кирлĕ пулать. Çавăн пекех аманнă çынсен суранĕсене хăвăртрах юсама та кирлĕ.

Кăçалччен Чăваш республикинче ӳсекен шăлан çырлине çителĕклĕ тăван пуçтарса усă курман, вĕсем ним усăсăр, йывăç çинчех пĕтнĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕ 1941 çулти апрелĕн 25-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх, республикăри хатĕрлев организацийĕсене шăлан çырли хатĕрлеме ятарласа план панă. Уйрăмăн илсен: Чăвашсоюзăн 110 тонна, Чăваштorгплодоовощăн 100 тонна, промсоветăн 35 тонна, Росхмелĕн 25 тонна, Наркомпищепромăн 35 тонна, Техлессемкультурăн 28 тонна шăлан çырли хатĕрлесе памалла. Апла пулин те, çак çулте асăннă организацисенче шăлан çырли хатĕрлес ĕçе халĕ те тивĕçлипе сарса яман. Çав вăхăтрах ку ĕçе вăхăтра туса ирттерме пур условисем те пулнă. Акă, Горький облаçĕнчи районсенче комсомол организацисемпе халăха çутта кăларас тĕлĕпше ĕçлекен организацисем ку ĕçе хăйсем пуçарса ертсе цырааçĕ. Çак опытпа Чăваш республикинчи комсомол организацийĕсен те усă курни кирлĕ.

Шăлан çырли пуçтарассине çаталăк шăнтма тытăниччен пĕтĕмпех вĕçлес пулать. Сивĕпе шăннă çырлан витаминĕ пĕтет. Çавăн пекех татса пуçтарнă çырлана çав куннех е тепĕр куннех типĕтме хумалла. Типĕтмесĕр выртсан, шăлан çырли çутăла хăйĕн витаминне çухатать.

Татса пуçтарнă шăлан çырлине типĕтме лартиччен малтан ăна пĕтĕмпех суйласа тасатмалла, унтан таса шыв çине ярса çăвас пулать. Шывран кăларнă хыççăн, шывне сăрăхтарсан типĕтме кăмакача лартмалла.

Шăлан çырлине сушилкăра типĕтсен унăн витаминĕ лайăхрах сыхланса юлать. Çавăнпа та, шăлан çырлине пахча-çимĕçсем типĕтмелли сушилкăра та типĕтме юрать.

Хальхи вăхăтра шăлан çырлине ытларах кăмакана лартса типĕтеççĕ. Çакăн пек чухне, кăмакари вĕри сывлăш пĕр пек тăман пирки, çырлана типĕтес ĕç вăрăма чăсăлса каять, çакă вара çырлан витаминне чакарасси патне илсе пырать. Апла ан пултăр тесен, çырлана кăмакара типĕтас ĕçе çапла майлаштарма пулать: кăмака тĕпне темиçе вырăна кирпĕчсем кĕртсе хураççĕ, çак кирпĕчсем çине вара тимĕр листсем сарса хумалла. Анчах тимĕр листăн вĕçĕсем кăмакан хыçалти стени патне 6—8 сантиметр ситмелле мар. Чĕрĕ çырлана пралукпа сыхса тунă ала çине е протвин çине 4 сантиметртан хулăм сарас пулмасть, çавăн пекех протвинсене пĕр-пĕринчен 10—15 сантиметр аяккарах лартас пулать. Кăмака аннинче енне питлĕхпе тачă хупса лартмалла. Питлĕхĕн аялтипе çӳленне 5—8 сантиметр хушă хăваraççĕ. Çакна сывлăш кĕме тата чĕрĕ сывлăш тухма тăваççĕ. Çырлана типĕтнĕ чухне кăмака вьюшкине тачă хупаççĕ. Типĕтме лартнă çырла пĕр кун хушшинче типсе çитеймест. Çавăнпа та ăна тепĕр кунхине е çав кунах кăмакана иккĕмĕш хут хутса кăларнă хыççăн лартас пулать. Типĕтнĕ çырлан нӳрлĕхĕ 16 процентран мала пулмалла мар.

Шăлан çырлине ытларах пухса хатĕрлес тĕлĕпше ĕçе халех вăйлатса яни кирлĕ. Ку ĕçре шкул ачисемпе пионерсем хатĕрлев организацийĕсене пысăк пулăшу пама пултараççĕ.

С. ШНЕЙДЕР.

СССР Наркомпищепромĕн Союзвитаминпром инструкторĕ.

Сĕтеклĕ апат хатĕрлеççĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Чăнкассинчи Калинин ячĕпе тăракан колхоз силос хывмалли плана 150 процент тултарчĕ. Кунсăр пуçне 1837 центнер утă хатĕрлесе хунă. Çичĕ̆ртри Чапаев ячĕпе тăракан колхозăн план тăрăх 90 тонна силос хывмалла пулнă, вăл 95 тонна хывнă. Çавăн пекех Шупашкар Есмĕлĕнчи «Волга» колхоз членĕсем те обществăллă выльăх-чĕрлĕх валли 50 тонна силос хыврĕç.

Ф. НИКОЛАЕВ.

ШАХАСАН. Чылай колхозсенче выльăх апачĕ хатĕрлес тĕлĕпше тăрăшса ĕçлеççĕ. «Березовка» колхоз ку тарничен 80 тонна, «Герой» колхоз 50 тонна, «Пионер» колхоз 35 тонна силос хыврĕç. Силос хывас тĕлĕпше пулса иртнĕ вунăкунлăхра Чулкăмакари комсомол пуçламĕш организацийĕ 25 тонна, Калиновкăри комсомол организаци 10 тонна, Атыковăри организаци 20 тонна силос хывнă. Силос хывас ĕçе шкул ачисем те активлăн хутшăнаççĕ. Çĕнĕ Мамири туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем «Активист» колхоз валли икĕ кун хушшинче 12 тонна силос хывнă. Чылай колхозсенче выльăх апачĕн рационне туса хатĕрленĕ, выльăх апатне колхозри ответлă çынсен аллине актпа çирĕплетсе параççĕ.

В. ЧЕРНОВ.

ИШЛЕЙ. Ярабайкассинчи туллимар вăтам шкулта вĕренекен ачасемпе учительсем «Доронин» колхоза 5 тонна силос хывса пачĕç.

А. НИКОЛАЕВ.

Йăшă витесем

Канаш районĕнчи чылай колхозсем выльăхсене хĕл каçарма лайăх хатĕрленсе пыраççĕ. Чапаев ячĕпе тăракан колхоз 80 лаша валли икĕ вите туса пĕтерчĕ. Нумай пулмасть «Коминтерн» колхоз членĕсем 80 пуç ĕне валли вите хатĕрлерĕç. Доронин ячĕпе тăракан колхоз 180 пуç валли, Шмидт ячĕпе тăракан колхоз 90 лаша валли виçĕ вите лартнă.

Çак колхозсем выльăх апачĕ хатĕрлес тĕлĕпше те тăрăшса ĕçлеççĕ. Хатĕрлесе хунă апата перекетлĕн расходлаçĕ.

И. МАЛОВ.

Силос хывмалли плана икĕ хут ирттерсе тултарнă

ЕТĔРНЕ. Балдай зооветучастокне кĕрекен колхозсем хĕле кĕме лайăх хатĕрленеççĕ. «Восток» колхоз сысна витине юсанă. Апытшкасси колхозĕнче выльăхсене хĕлкаçарма ятарласа пĕр çурт хатĕрленĕ. Тельман тата Вороши-лов ячĕпе тăракан колхозсем силос хывмалли плана 225 процент таран тултарчĕç. Çавăн пекех чылай колхозсем государствăна сĕт памалли обязательствăна пурнăçланă.

И. ТИМОНИН.

Пахча-çимĕçсем çителĕклĕ пулаççĕ

Чăваштorгпотребсоюз системи каçал иртнĕ çулхинчен темиçе хут ытларах пахча-çимĕçсем хатĕрлет. Хăяр хатĕрлес тĕлĕпше чылай райпотребсоюзсем лайăх ĕçлеççĕ. Кувакино райпотребсоюзĕ хăяр хатĕрлемелли плана ытлашшипех тултарнă. Çавăн пекех Хĕрлĕ Чутай, Комсомольски, Шăмăршă тата Елчĕк районĕсем те хăяр тăварламалли плана иртерсе тултарнă.

Халĕ пур районсенче те кăмпа хатĕрлес ĕç пырать. Ку вăхăтчен 116 тонна ытла кăмпа татса хатĕрленĕ. Первомайски район 35 тонна ытла кăмпа татса хатĕрленĕ. Пăрачкавпа Калинински райпотребсоюзĕсем те кăмпа хатĕрлемелли плана ăнăçлăн тултарнă.

Чăваштorгпотребсоюз каçал ытти çимĕçсене те (çĕрулми, купăста, помидор, сухан, кăшман-кишĕр) нумай хатĕрлеме палăртнă. Çак çимĕçсене пăхса усрамалли хранилищĕсене вăхăтра хатĕрленĕ. Хăшпĕр районсенче халь çĕрулми, купăста хатĕрлеме пуçланă та ĕнтĕ.

Пахча-çимĕçсем хатĕрленисĕр пуçне, Чăваштorгпотребсоюзăн каçал 110 тонна шăлан çырли пухса хатĕрлемелле. Халиччен ку тĕлĕпше нимех те туманах. Сутĕç Халăх Комиссариачĕпе тата ВЛКСМ обкомĕпе килĕшнĕ тăрăх, çитес канмалли кунсенче пур шкулсенче те шăлан çырли пуçтарма воскресниксем туса иртерме йышăннă. Паллах, ку ĕçре шкул ачисем пысăк пулăшу парĕç.

М. ДАНИЛОВ.

Çамрăк ăстаçсем

ШАХАСАН. Куславкка районĕнчи «Динамо» колхозри комсомолецсем колхоз производствинче кирлĕ профессисене вĕренме чĕнсе каланине сӳтсе-явнă хыççăн, «Ударник» колхозри çамрăк Константин Егоров тимĕрçĕ çĕнĕ вĕренме кăмăл турĕ. Часах ĕçе тытăнчĕ. Халĕ 16 çулти К. Егоров колхозра хăй тĕллĕн тимĕрçĕ пулса ĕçлет.

Ямашри вăтам шкулта 6-мĕш класра вĕренекен Василий Белов 4 çул хушши ĕнтĕ кролик ĕрчетес тĕлĕпше ĕçлет. Кăçал вăл 2 амаран 86 кролике ситерчĕ. В. Белов кроликсене типĕ, таса вырăнта усрать, лайăх, вăхăтра ситерет. В. Беловран Е. Ильин та кролик пăхма вĕренчĕ.

Унсăр пуçне ачасем çуллахи канихул вăхăтĕнче колхоз уйхирĕнче тăрăшса ĕçлерĕç. В. Белов 70 ĕçкунĕ, В. Артемьев 78 ĕçкунĕ, Н. Александров 60 ĕçкунĕ ĕçлесе илчĕç.

Х. ХУМОРОВ.

Трахсестра—агитатор

Лидия Тимофеева иккĕмĕш çул Хырай Ĕнелĕнче (Комсомольски район) трахомран сиплекен сестра пулса ĕçлет. Çак вăхăт хушшинче вăл чылай çынсене куç чирĕнчен сыватнă, таса тата культурăллă пурăнма вĕрентнĕ.

Çавăнпа пĕрлех Тимофеева юлташ колхозниксене хаçатсем вуласа парать. Унăн патне куçа эмел яртарма пынă çын кирек хăçан та ăна хаçат вуласа панине итлеме пултарать.

Уборка вăхăтĕнче Тимофеева юлташ колхозниксемпе пĕрле уйхирте пулса, вĕсене хаçатсем вуласа панă, бригадăра вунă номер стена хаçачĕ кăларнă, колхозниксене санитари ĕçне вĕрентнĕ. Вăл вĕрентнипе ГСО кружокĕнче 120 çын санитари енĕпе ĕçлеме вĕренмелли çирĕм сехетлĕ программăна вĕренсе тухнă.

В. ВИКТОРОВ.

Çулталăк планне тултарчĕç

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Пăлапуç Пашъелĕнчи «Комсомолец» колхоз членĕсем çулĕр строительствинче лашапа тата çурран ĕçлесе, 1941 çулти плана 100 проценчĕпех тултарчĕç. Лашапа ĕçленĕ çĕрте уйрăмăнах Захар Соколов тата ватă колхозник Иван Никитин юлташсем питĕ тăрăшса ĕçлерĕç.

А. ТУКМАКОВ.

Лекци

Паян, сентябрĕн 20-мĕшĕнче, ВКП(б) Шупашкар горкомĕн парткабинетĕнче **«Вăрçакан çĕршывсен экономикăллă ресурсĕсем»** темăпа лекци пулать. Лектор—**Макаров** юлташ.

Лекци каçхине 8 сехетре пуçланать. Пурте ирĕклĕнех кĕме пултараççĕ.

Парткабинет.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ОБЪЯВЛЕНИЕ

ПО РАСПОРЯЖЕНИЮ НАРОДНОГО КОМИССАРИАТА ФИНАНСОВ СОЮЗА ССР

ВКЛАДЫ НАСЕЛЕНИЯ,

ВНЕСЕННЫЕ В СБЕРЕГАТЕЛЬНЫЕ КАССЫ С 23 ИЮНЯ 1941 ГОДА, ВЫДАЮТСЯ ПО ПЕРВОМУ ТРЕБОВАНИЮ ВКЛАДЧИКОВ В ЛЮБОЙ СУММЕ.

Вклады, внесенные до 23 июня 1941 года, выдаются в порядке, временно установленном с 23 июня 1941 года.

ХРАНИТЕ

СВОИ ДЕНЕЖНЫЕ СРЕДСТВА В СБЕРЕГАТЕЛЬНЫХ КАССАХ!

КАЖДЫЙ РУБЛЬ, хранящийся в сберегательной кассе, укрепляет оборонную мощь Советского Союза.

Управление Госгрудсберкасс и Госкредита Чувашской АССР.

2—2

КИНО

„Антон Иванович çилленет“

Çак кунсенче республикăри экрансем çине «Антон Иванович çилленет» ятлă музыкăллă кинокомеди тухать. Çак картинăна Е. Петровпа Мунблит сценарийĕ тăрăх Сталинла преми лауреачĕ — режиссер А. Ивановский тунă.

«Антон Иванович çилленет» фильм пирĕн маслă тăван çĕршывра чăн-чăн культурăллă музыка творчествин мĕнле ӳссе пынине кăтартса парать. Вăл халтурăллă музыкăна хирĕç тăрать.

Лайăх музыкăна пурте юратаççĕ, анчах çав музыка чăн-чăн пурнăçран илсе çырнă музыка пулма тивĕçлĕ. Халтурăллă музыка совет граждăнĕсене килĕшӳллĕ мар.

«Антон Иванович çилленет» фильмăн паллă геройĕ — консерваторире музыкăна вĕрентекен профессор Антон Иванович Воронов. Вăл — музыкăна чунтан юратакан талантлă çын. Анчах Антон Ивановичăн идеалĕ — классикăллă музыка пулса тăрать. Уншăн Бах тата Гендель композиторсем çырнă музыка çеç чăн-чăн музыка пек туйăнать. Вăл опереттăна е ытти çавăн пек çăмăл жанрлă музыкăсене кураймасть. Хăй умĕнче çавăн йышши жанрсем çинчен калаçнине илтсен, çилленет, тарăхать.

Сасартăк, Антон Ивановичăн тăван хĕрĕ Сима, консерваторинче вĕренекенскер, ашшĕнчен вăрттăн, çамрăк композитор Мухин çырнă музыкăллă опереттăра актриса пулса вылять. Сима, уçă та илемлĕ сасăллăскер, хăйĕн ролĕнче выляса çынсене тĕлĕнтерет.

Сима Мухин композитор опереттинче выляни çинчен Антон Ивановича музыкант-халтурщик Керосинов элеклесе парать. Профессор çакна илтсен хĕрĕ çине çавтери хытă çилленет. Вăл васкасах театра каять. Антон Иванович çитнĕ тĕле унăн хĕрĕ Сима опереттăн юлашки сыпăкне юрлать. Антон Иванович хăй хĕрĕ илемлĕ юрланине ытараймасть. Вăл çилленет те, савăнать те, нимĕн тума та пĕлмест. Театртан вăл Симăн куçне курăнмасăр васкаса тухса каять. Ун чĕринче темĕнле çĕнĕ туйăмсем вăранаççĕ.

Сывăрма выртсан, Антон Иванович тĕлĕкре хăйĕн чи юратнă композиторне Баха курать. Вăл кунта, çамрăк композитор Мухинпа Сима майлă пулса, Баха хирĕç тавлашать. Çамрăк композиторсем те лайăх музыка çырма пултарни çинчен ĕненме тытăнать...

Акă Сима тата Антон Ивановичăн ытти ачисем театртан тавăрнаççĕ. Çак вăхăтра Антон Иванович çамрăк композитор çырнă опереттăн музыкине выляса ларать.

Картина паха симфонилле концертпа пĕтет. Çавăнпа та çак паха музыкăпа пуянлатнă картина куракансене питĕ килĕшет.

Антон Иванович рольне Коновалов артист, «Музыкальная история» фильмра выляканскер, вылять. Сима рольне — артистка Целиковская, композитор Мухин рольне — артист Кадочников, музыкант-халтурщик Керосинов рольне — артист Мартинсон выляççĕ. Композиторĕ — Кабалевский.

«Антон Иванович çилленет» кинокартина пирĕн социализмлă маслă çĕршывра ĕççыннисем хушшинче пысăк талантсем ӳссе çитĕннине, пирĕн ирĕклĕ çĕршыв талантсен çĕршывĕ пулса тăнине, халтура валли, яшăх ĕç валли пирĕн патра нимĕнле вырăн та çуккине çавтери туллин кăтартса парать. Фильм совет çыннисен ĕçри, кĕрешӳри хавхаланăвне тата ытларах çĕклет.

М. ДАНИЛОВ-ЧАЛДУН.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 5573

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 448. Ф. б. 98. 84 п. л.